# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ 1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

*60 (8627) №* * *Юнкун, 2018 çулхи çурла (август) уйăхĕн 15-мĕшĕ* * *Хакĕ ирĕклĕ*

**Вĕренӳ**

## Хастар вĕрентекене – республика пуçлăхĕн хавхалантарăвĕ



**Сăн ӳкерчĕкре** Муркаш шкулĕн вырăс чĕлхипе литературин хастар вĕрентекенне Светлана Рожковăна куратăр. Пысăк çитĕнĕвĕсене кура вăл Чăваш Республикин Пуçлăхĕн укçан хавхалантарăвне тивĕçрĕ. Пултаруллă учителĕн педагогикăри ĕç стажĕ çирĕм тăхăр çул пулчĕ.

Светлана Измайловна учитель пулмах çуралнă тейĕн. Вăл хăйне йăлтах ачасене тарăн пĕлӳ парассине халалланă. Çавăнпа та ăна ачасем питĕ кăмăллаççĕ, ашшĕ-амăшĕ те хисеплет.

Тăрăшуллă вĕрентекен хăй тĕллĕн тата ачасемпе тăтăшах тĕрлĕ конкурса хутшăнать, проектсем çырса хӳтĕлет. Район тата унăн тулашĕнче мастер-классем иртерет, унăн канаш-сĕнĕвĕ вĕрентекенсемшĕн питех те вырăнлă.

Вăл экологи темипе те тачă çыхăнса ĕçлесе пырать. Ача-пăча обществăлла пĕрлешĕвĕсен ертӳçисем умĕнче Пĕтĕм Раççей шайĕнчи «Раççей шывĕсем» экологи урокне иртернĕ, космос фестивальне хутшăннă тата ытти те. Пĕтĕмĕшле илсен – тăтăшах шыравра.

Светлана Измайловна кадетсемпе тухăçлă ĕçленине палăртмасăр иртме çук. Ку енĕпе вăл вунă çул ытла тăрăшать. Раççей шайĕнче кадетсемпе тата уйрăм ачасемпе пĕрремĕш вырăна тивĕçни вĕсемшĕн çĕнĕлĕх мар, кун пек çитĕнӳ сахал мар. Регионсем хушшинчи ăмăртусене те хутшăнаççĕ.

Ĕçне кура – хисепĕ. Светлана Измайловна тивĕçнĕ тĕрлĕ шайри Хисеп хучĕпе Тав çырăвĕ питĕ йышлă. Вăл Раççей шайĕнчи чыславсене те пĕрре кăна мар тивĕçнĕ. Чи сумлисенчен пĕри – ачасене çарпа патриот воспитанийĕ парассине пысăк тӳпе хывнăшăн Александр Невский медалĕпе чыслани.

Светлана Измайловнăна черетлĕ çитĕнӳпе саламлатпăр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Йыхрав**

## Уява – пыл тутанма, савăнма!

Августăн 14-мĕшĕнче Пыл спасне паллă турăмăр. Муркашсен вара Пыл спасĕпе çыхăннă ятарлă уяв пур. Çапла вара çитес эрнекун, августăн 17-мĕшĕнче, район уявне – «Сывлăх – пыл хурчĕн çунатти çинче» ятпа иртекен пыл уявне пухăнатпăр. Район центрĕнче иртекен çак уявра çав кун пылне тата пыл продукчĕсене туянма-астивме, художество пултарулăх коллективĕсен ташши-юррине пăхса киленме, пĕр сăмахпа каласан – тулли кăмăлпа савăнма май пулĕ.

Уяв программипе пăхнă мероприятисем 10 сехетре пуçланаççĕ. Район администрацийĕ умĕнчи тӳремре пыл тата пыл продукчĕсен ярмăркки иртересçĕ. Вĕсене кирлĕ чухлĕ туянма та май пулĕ.

Çакăнтах ял тăрăхĕсен павильонĕсем те хăйсем патне йыхравлĕç. Уява пухăннисене вĕсем «Пыл уявне» – выставка-представление чĕнĕç.

10 сехетрен тытăнса шкул ярмăркки те ĕçлĕ. Апла пулсан ашшĕ-амăшĕн шкул ачисем валли çитес вĕренӳ çулне пусăнма кирлĕ хатĕрсене туянма май пулĕ.

10 сехет çурăра «Сывлăх» спорт шкулĕ умĕнчи сцена çинче тата ун умĕнчи тӳремре «Пыл уявне йыхравлатпăр!» ятпа театрализациленĕ музыка композицийĕ пуçланать.

Уява савăнăçлă луру-тăрура 11 сехетре уçаççĕ. Уява пухăннисене район пуçлăхĕ Игорь Николаев, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев, Чăваш Республикин гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру ыйтăвĕсемпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн председателĕ Вениамин Петров, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн председателĕн çумĕ Александр Федотов, «Владимирская» Турă Амăшĕн турăшĕн Муркашри чиркĕвĕн настоятелĕ Федор протоиерей, республика хурт-хăмăр кантурĕн ертӳçи Геннадий Максимов, чĕннĕ хăнасем саламлаççĕ.

Уява пынисене пуян концерт программи кĕтет. Çав кун районти художество пултарулăх коллективĕсем çынсене хăйсен пултарулăхĕпе туллин савăнтарĕç, уяв кăмăл-туйăмĕ парнелĕç.

Уявăн кăнтăрлахи программи вĕçленес умĕн районти хурт-хăмăр ăстисен конкурсне пĕтĕмлетĕç. «2018 çулхи чи лайăх пыл» конкурсра мала тухакан, паллă ĕнтĕ, парнесĕр юлмĕ. Парнинчен ытла ячĕ мĕне тăрать. Ял тăрăхĕсем хушшинчи «Аслă спаса кĕтсе илетпĕр!» фестиваль-конкурс пĕтĕмлетĕвĕсене те çавăнтах пĕлтерĕç. 14 сехетре уявăн кăнтăрлахи программине вĕçлеме палăртаççĕ.

Çапла, кăнтăрлахи программăна кăна. Каçкӳлĕм 19 сехетрен тытăнса вара пыл уявĕ малалла тăсăлĕ. Уявăн каçхи музыкăпа кану программи те пуян. «Çу кунĕсен пĕтмĕшĕнче» мегадискотекăра яшкĕрĕм ташласа-юрласа савăнма пултарĕ.

Пĕр сăмахпа, никама та кичем пулмĕ уявра. Апла пулсан пурне те хапăл тăваççĕ уява!

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Районта**

## Пĕрлехи информаци кунĕ

Паян пирĕн районта, пĕтĕм республикăри пекех, Пĕрлехи информаци кунĕ иртет. Ял çыннисемпе, ĕç коллективĕсемпе йĕркелекен тĕл пулусенче Раççей Федерацийĕн пенси законодательствине кĕртме палăртакан улшăнусем, республикăра кĕрхи уй-хир ĕçĕсем мĕнле пыни пирки сăмах пырĕ. Çавăн пекех вырăнта пурăнакансен пуçарулăхне тĕпе хурса ял тăрăхĕсене хăтлăрах тăвассин тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин проекчĕсене пурнăça кĕртесси, пушар тухасран асăрханасси, шывсем çинче тимлĕ пуласси пирки те калаçу пулĕ. Çынсем тĕл пулусенче хăйсене интереслентерекен ыйтусем çине тулли хурав илме пултарĕç. Информаци кунĕн тĕл пулăвĕсем кашни ял тăрăхĕнчех иртĕç.

## Хирте ĕç чарăнмасть

Уяр кунсемпе туллин усă куракан çĕр ĕçченĕ вырма лаптăкĕсене куллен ӳстерсе пырать. Нумай хуçалăхсен «хир карапĕсем» çĕнĕ çăкăр пуссисенче кун кунлаççĕ. Уяр кунсенче писсе çитнĕ тырă пуссисенче районти 18 комбайн иртен пуçласа сĕм тĕттĕмчен ĕçлет.

Район администрацийĕн экономикăпа АПК аталанăвĕн пайĕнчи оперативлă кăтартусемпе районти çĕр ĕçченĕ августăн 14-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе 3913 гектар çинчи тыр-пулăна çапса тĕшĕленĕ. Ку вăл пĕтĕмпе майлах кĕрхи культурăсем.

Иртнĕ кунсенче Чкалов яч. хис., Е. Андреев яч. хис., Ильич яч. хис. хуçалăхсем çуртрисен пуссисене те тухнă.

## Пĕрремĕш ачашăн – пособи

Пĕлтĕр, 2018 çултан тытăнса çемьере пĕрремĕш ача çуралнисем уйăхсерен паракан 8910 тенкĕ пособие тивĕçеççĕ. Пособи илме çак вăхăта районти социаллă хӳтĕлĕх пайне заявлени паракансем 34 çемье пулнă. Вăл шутран 33 çемьене уйăхсеренхи тӳлевпе тивĕçтерме пусăннă. Пĕтĕмĕшле 1 млн та 544,6 пин тенкĕ тӳленĕ те ĕнтĕ. Республикипе вара çемьере пĕрремĕш ача çуралнисене пособие тивĕçтерме 2018 çул валли 143,47 млн тенкĕ пăхса хăварнă. Пособие тивĕçес тесен, кăçал пĕрремĕш ача çуралнă çемьесен кирлĕ документсене илсе МФЦ-на е социаллă хӳтĕлĕх пайне каяс пулать.

## 1859 пенсионерăн пенси ӳснĕ

Августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2017 çулта ĕçленĕ пенсионерсен страхланă пенсийĕсем ӳснĕ. Ӳсĕм мĕн чухлĕ пуласси ĕç паракан ĕçлекен пенсионершăн иртнĕ çул взноссене пенси фондне мĕн чухлĕ тӳленинчен килет. Çавăнпа та ӳсĕм кашнин расна. Апла пулин те вăл уйăхне 3 пенси балĕнчен е 244 тенкĕ те 47 пусран ытларах пулма пултараймасть. Муркаш районĕнче официаллă ĕçлекен 1859 пенсионерăн пенсийĕ вăтам шутпа 135 тенкĕ те 70 пус ӳснĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ, А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**

Саламлатпăр

Пирĕн юратнă çыннăмăра – Муркашра пурăнакан **Артур Мефодьевич СЮТРУКОВА** 60 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн



саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, тапса тăракан çăлкуç пек иксĕлми вăй-хăват, инçе çул евĕр вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Мăшăрупа, ачусемпе, мăнукусемпе ĕмĕр вĕçне çитиччен савăнса пурăнмалла пултăр. Çумăнта яланах çывăх тăвансем, шанчăклă юлташсем пулчăр.

**Саламлаканĕсем: Игнатьевсем, Пономаренкосем, Федькинсем тата Ксенофонтовсем.**

Юратнă мăшăра, йăмăкăма, аннене, хисеплĕ тăвана – Лантăш ялĕнче пурăнакан **Ольга Давыдовна ЕМЕЛЬЯНОВĂНА** 60 çулхи юбилей



ячĕпе чун-чĕререн тухакан чи ырă та ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Уйăх пек çутă кун-çул, çурхи хĕвел пек ырă кăмăл, инçет çул евĕр вăрăм ĕмĕр, чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, куç тулли телей, тус-тăвансемпе шăкăлтатса пурăнма çутă ăраскал сунатпăр. Эпир санпа мухтанатпăр, эсĕ пирĕншĕн ылтăнран та хаклă.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрĕвĕ, мăнукĕсем, аппăшĕпе пиччĕшĕсем, тăванĕсем, хăти-тăхлачисем.**

Хисеплĕ те хаклă тăвана – Çурлатри ялĕнче пурăнакан **Нина Семеновна ЯРИКОВĂНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн, ăшшăн саламлатпăр.



Пурнăçра ырри, лайăххи – пурте пултăр сан валли. Ачусемпе, мăнуксемпе савăнса пурăнма юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Çын хушшинчи хисепӳ ан иксĕлтĕр, телейпе те савăнăçпа кăна çуталчăр сан куçусем. Турри сана татах та нумай çул пурăнма сывлăхне, вăй-халне парса тăтăр. Эпир сана хисеплетпĕр, юрататпăр. Яланхи пекех ĕçчен те пултаруллă пулма сунатпăр.

**Салампа: Алексеевсен, Ярутковсен, Герасимовсен çемйисем.**

Асăрхаттару

## Ултавçăсем çывăрмаççĕ

Паллă ĕнтĕ, ыттисене шанакан, ырă кăмăллă çынсем, вăл шутра ватă çынсем хальхи вăхăтра час-часах ултавçăсен серепине çакланаççĕ. Ултавçисем вара çывăрмаççĕ, çынсен укçа енчĕкне пушатмалли çĕнĕрен çĕнĕ мел шыраса тупма тăрăшаççĕ.

Акă кăçалхи август уйăхĕн пуçламăшĕнче Катькас ял тăрăхĕн территорийĕнче газ тухнине систерекен устройствăсем вырнаçтарса паракан çамрăк çынсем тупăннă. Паллă ĕнтĕ, тӳлевсĕр мар, пысăк хакпа. Вĕсем ватă çынсем патне çăмăллăнах кĕнĕ. Кун пеккисен документсем пурри çукки, вĕсем ăçта ĕçлени, мĕнле организацирен пулни пирки нихăшĕ те интересленмен.

Нумаях пулмасть Чуманкасси ял тăрăхĕн территорийĕнче пенси ÿсĕмĕнчи хĕрарăм патĕнче çамрăк çынсем пластик чӳречесене хаклă хакпа юсанă.

Çавăнпа та РФ Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕ çынсене асăрханулăрах пулма ыйтать. Палламан çынсене киле кĕртме кирлĕ мар. Хăвăрăн пĕччен пурăнакан ватă тăванăрсене те çавăн пирки асăрхаттарма ан манăр. Хăвăрăн кил таврашĕнче, картишĕнче ют çынсене асăрхарăр пулсан, çийĕнчех полиципе пĕлтерме тăрăшăр. Сирĕн пата служба ĕçĕпе пыракан çыннăн çумĕнче яланах удостоверени пулмалла. Хăвăр пата пыракансене, вĕсен автомашинисен регистраци номерĕсене астуса юлма тăрăшăр. Телефон çине ӳкерсе илме те пултаратăр.

Сыхланакана Турă та сыхлать тенине ан манăр.

**С. ЕГОРОВ,**
**РФ Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн уголовлă шырав уйрăмĕн оперуполномоченнăйĕ.**

Комисси ларăвĕнчен

# Парăмсем çав-çавах пысăк

Августăн 8-мĕшĕнче ĕç укçине вăхăтра тата туллин тӳлессин, официаллă ĕçлеменнине чакарассин ыйтăвĕсемпе ĕçлекен ведомствăсем хушшинчи комиссин черетлĕ ларăвĕ иртрĕ.

Ларăва Раççей Федерацийĕн налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 8-мĕш номерлĕ инспекцийĕн пуçлăхĕ В. Андреев ертсе пычĕ. Комисси ĕçне РФ Пенси фончĕн районти пайĕн ертӳçи И. Гришина, район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна аталантарас енĕпе тимлекен канашăн ертӳçи В. Паладьев тата ытти яваплă ĕçчен хутшăнчĕ.

Чи малтанах В. Андреев вырăнти бюджета килекен налуксен енĕпе пухăннă парăмçăсене уйрăммăн тишкерчĕ. Пысăк парăмçăсене ларăва ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе пĕрле чĕннĕ. Вĕсем парăма татма пултарас вăхăта шантарса палăртрĕç. Тӳлеве çав-çавах татманнисемпе суд приставĕсем ĕçлеме пуçлĕç.

Кун йĕркинчи черетлĕ ыйтупа район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн ĕçченĕ А. Суворова паллаштарчĕ. Арендăри çĕр лаптăкĕсемшĕн, пурлăхшăн район тата ял тăрăхĕсен бюджечĕсене аренда тӳлевĕн парăмĕсене чакарассипе епле ĕçлени çинче чарăнчĕ.

Çултаăк пуçланнăранпа çак тапхăр тĕлне район администрацийĕ 8 427 гектар çĕр тĕлĕшпе 1711 аренда килĕшĕвĕ, 10 организаципе 241,68 тăваткал метр муниципалитет пурлăхĕн арендин килĕшĕвне тунă. Çак килĕшӳсем тăрăх çĕр лаптăкĕсен çултаăкри аренда тӳлевĕ – 6 миллион та 834 пин тенкĕпе, муниципалитет пурлăхĕн аренда тӳлевĕ 346 946 тенкĕ те 89 пуспа танлашать.

Августăн 8-мĕшĕ тĕлне арендаторсем çĕршĕн тата муниципалитет пурлăхĕшĕн тӳлессин парăмĕ 2 миллион та 893 пин тенкĕпе танлашнă, вăл шутра çĕр арендишĕн – 2 миллион та 850 пин тенкĕ, пурлăхшăн – 43 000 тенкĕ.

9 арендаторăн 526 пин тенкĕ парăмне шыраса илес тĕлĕшпе документсене суд приставĕсем патне тăратнă. 8 арендаторăн 1 миллион та 873 пин тенкĕ парăм тĕлĕшпе документсене суда пăхса тухма панă. 494 пин тенкĕ парăм тăрăх претензи ĕçĕсем пыраççĕ.

Парăмçăсенчен çултаăк пуçланнăранпа 3 миллион та 853 пин тенкĕ парăм шыраса илес тĕлĕшпе 100 претензи çырăвне тăратнă, вăл шутра 534 пин тенкĕ пени. Претензи ĕçне ирттернĕ май 54 арендатортан 1093212 тенкĕ шыраса илнĕ.

Çултаăкăн пĕрремĕш çурринче парăмçăсем пирки 17 иск заявленийĕ çырнă, вăл шутра Муркаш район судне – 4, миравай судăн 1 тата 2 номерлĕ суд участокĕсене – 7, Чăваш Республикин Арбитраж судне 6 иск заявленийĕ тăратнă.

Çак тапхăр тĕлне 3 арендаторăн парăмне ирĕксĕрлесе шыраса илнĕ. Исполнительный хут тăрăх 526 пин тенкĕ шыраса илмелли юлнă. Июль уйăхĕнче 2 арендаторăн 207993 тенкĕ парăмне ирĕксĕрлесе шыраса илме ĕçсене суд приставĕсем патне тăратнă.

А. Суворова каланă тăрăх, августăн 8-мĕшĕ тĕлне аренда енĕпе уйрăмах пысăк парăмлисен шутĕнче çаксем: «СК Виком» ООО, «Дорисс-Нефтепродукт» ООО, «Агрофирма им. Мичурина» ООО, «Агрофирма Путь Ильича» ООО, Н. Никитин, И. Никитин, А. Козлов, Ю. Хусаинова, В. Иванов, М. Зайцев, С. Юхтанов, Т. Петрова предпринимательсем. Çавăн пекех пай ĕçченĕ малашне те парăмсене шыраса илессипе çине тăрса ĕçлессине палăртрĕ.

Кун йĕркинчи виççĕмĕш ыйту çинче те А. Суворова чарăнчĕ, социаллă найм килĕшĕвĕсем тĕлĕшĕнчи информаципе паллаштарчĕ. Муниципалитет пурлăхĕ шутĕнчи пурăнмалли çурт-йĕр фондĕнче 158 объект, вĕсен калăпăшĕ 6402,2 тăваткал метрпа танлашать. «УК ЖКХ» чикĕллĕ яваплăхлă общество район администрацийĕн пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен пайне тăратнă кăтарту тăрăх, парăм 330354, 92 тенкĕпе танлашнă.

Çултаăк пуçланнăранпа социаллă найм килĕшĕвне çыртарассипе 25 асăрхаттару тăратнă, вăл шутран 10-шĕ хăй ирĕкĕпе çырнă. Çынсенчен 41 хваттершĕн социаллă найм тӳлевĕ муниципалитет пурăнмалли çурт-йĕр фондне вăхăтра кусса пымасть.

В. Андреев ларăва пĕтĕмлетсе кашни парăмçăпа уйрăммăн тата вăхăта сая ямасăр ĕçлемеллине, ку тĕлĕшпе çирĕп йĕрке пулмаллине, парăмçăсем патне вырăна тухмаллине палăртрĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав

# Ăнса пулчĕ-çке пан улми

Кăçал сад-пахча пан улмипе питех те тулăх, ир пулаканни те, каярахри те пысăк тухăçпа савăнтарать. Анчах та ку ырлăх-пурлăха ăçта вырнаçтарасси чылайăшне хумханатарать, хушма хуçалăх валли ытлашши пулни куçкĕрет. Çынсем кĕр кунĕсенче ялсем тăрăх пан улми туянма тухасса чăтăмсăррăн кĕтеççĕ.

Хăйĕн пăшăрханăвне Муркашра пурăнакан В. Мастеров та пытармарĕ. Вăл районта пан улмирен тĕрлĕ çимĕç хатĕрлессипе ĕçлекен кооператив çуккишĕн кăмăлсăр. Аякран кӳрсе килнĕ ӳкерчĕк çинчи евĕр хитре çимĕç самай илĕртӳллĕ пулнăран, сентре çинче пирĕн патри пан улмие курайман.

**Чи малтанах ыйту хуравне район администрацийĕн экономика пайĕн ертӳçинчен Ольга Тимофеевăран илес терĕм:**

– Сад-пахчаçă бизнесĕ – çуллахи-кĕркуннехи тапхăрти ĕç. Çак бизнесăн чи ответлă вăхăчĕ çимĕçе тĕрĕс пухасси, управа хатĕрлесси пулса тăрать. Пахалăхсăр çимĕç вара наччасрах юрăхсăра тухса ку енĕпе ĕçлессине ура хурать.

Районта ял хуçалăх потребитель кооперативĕсем ĕçлеççĕ. Шел пулин те, вĕсем хушшинче пан улмирен продукци туса кăларассипе тимлекен çук. Тĕл пулусенче, пухусенче ку ыйтăва çынсем пĕрре кăна мар хускатаççĕ. Çавна шута илсе эпир потребитель кооперативĕсене, хресчен (фермер) хуçалăхĕсене ку енĕпе ĕçлеме сĕнтĕмĕр. Хальлĕхе кăмăл тăвакансем пулмарĕç. Çынсен ыйтăвне, сĕнĕвне манмастпăр, шута илетпĕр.

Çапах та хушма хуçалăхра ӳстернĕ экологи тĕлĕшĕнчи пахалăхлă çимĕçе пĕтме памалла мар, унпа усă курса тупăш илме тăрăшмалла. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, район хаçатĕнче пан улми туянакансем пĕлтерӳ параççĕ. Çавăнпа та çынсен вĕсемпе çыхăнсан лайăх пулмалла.

Ыйту паракан райпо тытăмне те ку енĕпе ĕçлеме сĕнет.

**Муркаш райпо канашĕн ертӳçи Борис Андреевăн хуравĕ çапла пулчĕ:**

– Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, кӳршĕ регионсенче – Чул хула, Самар облаçĕсенче – улма-çырла тирпейлес енĕпе анлăн ĕçлеççĕ. Чăваш Енте ун пек пысăк предприятисем çук, пĕчĕкрех кăлăпăшлă цехсем пур. Тухăç çулсеренех пысăк пулманран ун йышши цеха хамăр патра уçасси тăкаклă тесе шухăшлатăп эпĕ.

Чăвашпотребсоюз системи çынсен ыйтăвне тĕпе хурса ку енĕпе ĕçлеме пуçларĕ. Пан улмирен сĕткен кăларакан çĕнĕ йышши оборудование Комсомольски районĕнчи «Кооператор» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра вырнаçтарнă. Вĕсем пан улмирен сĕткен кăларма пуçланă ĕнтĕ. Ку тĕлĕшри инноваци проекчĕ пекки республикăра çук. Çулсерен çак цехра 1,5 пин тонна ытла сĕткен кăларма палăртнă.

Çавăн пекех кӳршĕри Элĕк районĕнчи пахча çимĕç комбиначĕ те çынсенчен пан улми йышăнать, каялла хатĕр продукципе тивĕçтерет.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Пĕчĕк тата вăтам предпринимательство

# Предпринимательсем хастар



**Сăн ӳкерчĕкре** Владимир Паладьева куратăр. Вăл **район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна аталантарас енĕпе тимлекен канашăн ертӳçинче** тăрăшать, çавăн пекех Владимир Дмитриевич районти обществăлла канаш, ĕç укçине вăхăтра тата туллин тӳлессин, официаллă ĕçлеменнине чакарассин ыйтăвĕсемпе ĕçлекен ведомствăсем хушшинчи комисси йышĕнче.

Район администрацийĕн экономика пайĕнче палăртнă тăрăх, Владимир Дмитриевич канаш тилхепине тытса пыма пуçланăранпа хăйне ответлă ĕçчен, хастар йĕркелӳçĕ, ырă кăмăллă предприниматель шайĕнче кăтартать.

Нумаях пулмасть Владимир Дмитриевича республика шайĕнче Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн, промышленноçпа суту-илӳ министерствин Хисеп грамотине парса чысларĕç. Çакă ăна малашне татах та ытларах ĕçлеме хавхалантарĕ.

Предпринимательство субъекчĕсем тата предпринимательство канашĕ район пурнăçĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ. Асăннă канаш предпринимательствăн мĕнпур сферине пĕрлештерет, вăл шутра суту-илӳ, тĕрлĕ услуга парасси, йăла ыйтăвĕсемпе тивĕçтересси, обществăлла апатлану тата ытти. Владимир Дмитриевич палăртнă тăрăх, канаш членĕсем район шайĕнче предпринимательство сферине пырса тивекен документсене программăсене пăхса тухнă çĕре хутшăнаççĕ, приоритетлă социаллă программăсене хутшăннисĕр пуçне пуçаруллă предпринимательсем ыркăмăллăх акцийĕсене йĕркелеççĕ.

Район администрацийĕн официаллă сайчĕ пĕлтернĕ тăрăх, пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсем районта 712, вăл шутра 114 пĕчĕк предприяти, вăтамми – 5, индивидуаллă предприниматель – 511, хресчен (фермер) хуçалăхĕсем – 82. Иртнĕ çулăн пĕрремĕш çур çулхи кăтартăвĕпе танлаштарсан, кăçал пĕчĕк тата вăтам бизнес субъекчĕсен йышĕ 0,4 процент чухлĕ, пĕчĕк предприяти хисепĕ 1,8 процент чухлĕ ӳснĕ.

Субъектсене экономика уйрăмлăхĕ тĕлĕшпе хаклас пулсан, ытларахăшĕ вакkăн суту-илӳре тăрăшни курăнать. Кăçалхи çур çулта ваккăн суту-илӳ туни 482 миллион тенкĕпе танлашать. Çакăнта Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен тӳпи 90,5 процент.

Çӳлерех асăннă тапхăрта обществăлла апатланури пĕтĕмĕшле таварçаврăнăш 60 миллион тенкĕпе танлашать, вăл шутра Муркаш райповĕн кăтартăвĕ – 26,5 миллион тенкĕ, Мăн Сĕнтĕр райповĕн – 20 миллион тенкĕ.

600 миллион тенкĕлĕх 14 инвестици проектне пурнăçласа 223 ĕç вырăнĕ уçасси – кăçалхи ĕç тĕллевĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Раççейри ял вăййисем

# Çĕнтерӳпе таврăнчĕç

Çурла уйăхĕн 2 – 7-мĕшĕсенче Курск пĕккинчи Çĕнтерӳ 75 çул тултарнине халалласа кунта ял ĕçченĕсен Пĕтĕм Раççейри 12-мĕш çуллахи спорт ăмăртăвĕсем иртрĕç. Унта Чăваш Республикин команди йышĕнче пирĕн районти çамрăк механизаторсем те хутшăнма тивĕçрĕç. Вĕсем: Катькас ял тăрăхĕнчи Кĕрекаç каччи Геннадий Черепанов тата Çеçмер хĕрĕ Алена Никитина **(сăн ӳкерчĕкре)**. Каласа хăвармалла, Генăпа Алена та Раççейри ăмăртуран пысăк çитĕнӳпе таврăнчĕç. Унта вĕсем Муркаш районне çеç мар, Чăваш Республикине те çӳллĕ шая кăларчĕç. Ăмăрту тĕсĕсем тата ӳсĕмсем пирки уйрăммăн.

Кустăрмаллă тракторпа тĕрлĕ фигура туса хăйĕн дистанцине 2 минут та 7 çеккунтра тухса Алена хĕрарăм трактористкăсем хушшинче Раççей çĕнтерӳçи пулса тăнă. Гена вара çак мелпех арçынсем хушшинче 2-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Вăхăтсене пĕрлештерсен вĕсем чи маттуррисем пулни палăрнă. Виçĕ тĕспе ăмăртса (хĕрарăмсем 300 метр чупса, кĕлеткене çĕклесе тата тракторпа çӳресе; арçынсем 500 метр чупса, турник çинче туртăнса тата тракторпа çӳресе) пирĕн ентешсем пĕрлехи кăтартусемпе 2-мĕш вырăна тухнă. Çак мелпех харпăр хăйшĕн ăмăртса Алена 2-мĕш вырăн, Геннадий 4-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарнă. Ку кăтартусемпе вĕсем Раççейри нумай тракториста хысçалти вырăна хăварнă.

Катькас ял тăрăхĕнчи хĕрпе каччă тракторпа ĕçлессине ашшĕсенчен алла илнĕ. Гена 2013 çулта тракторист-машинист удостоверенилле пулса тăнă пулсан, Çеçмер пики хăйĕн харпăрлăхĕнчи «Беларусь – 892» тракторпа çӳреме 2016 çулта ирĕк илнĕ. Унтанпа иртнĕ 2 çул хушшинче Алена икĕ хутчен Пĕтĕм Раççейри хĕллехи тата çуллахи ял спорт ăмăртăвĕсенче чемпионка ята тивĕçрĕ. «Атте пуçăннă ĕçе сӳнме парас килмест», – терĕ вăл пысăкрах ĕмĕтсем те пуррине палăртса.



Ашшĕпе ачаллах тырă вырма хутшăннă Гена механизаторсăр пуçне агроном та. Чăл Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнчи агрономи факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Унăн ĕмĕчĕсем те малаллах. «Хамăр хыçри çӳлĕке йăлт кубокпа та дипломпа тултарас тетпĕр», – малашлăха пăхса каласрĕ 25 çулхи механизатор эрне каяллла çĕнсе илнĕ кубока алла илсе.

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Августăн 14-мĕшĕ – Пыл спасĕ

# Ашшĕ-амăшĕн ĕçне малалла тăсаççĕ



Ытти отрасльсенчи пекех хурт-хăмăр ĕрчетнĕ çĕрте те ĕç династийĕсем чылай тĕл пулаççĕ. Пыл хурчĕ ĕрчетес ĕçре ашшĕ ывăлне ăс памасăр, амăшĕ хĕрне вĕрентмесĕр, çамрăксем вара аслисен ĕç опытне туллин алла илмесĕр чĕрес тулли паха продукци илесси пулмастех.

Çĕнĕ стильпе августăн 14-мĕшĕнче (киввипе – августăн 1-мĕшĕнче) Раççейре ĕлĕк-авалтанпах Пыл спасне анлăн уявланă. Çак кун çывхарнă май кашни утар çывăхĕнчи тавралăх çĕнĕ пылăн асамлă шăршипе тулать. Апла пулсан утарçăсем çанă таварса пыл илес ĕçе кӳленнĕ.

Пыл спасне хатĕрленсе эпир кăшт маларах «Путь Ильича» агрофирмăн Зинаидăпа Владимир Ивановсем ачисемпе пĕрле тытса тăракан Платкассинчи утарне çитрĕмĕр.

...Вăрманлă вырăн, лăпкă та таса тавралăх, сывлăшра пыл хурчĕ вĕçни çеç илтĕнет. Утар хапхинчен кĕрсенех усланкăна тирпейлĕ вырнаçтарнă йышлă вĕлле куç умне пулчĕ. Вĕсем хушшинче ашшĕпе амăшĕ тата ывăлĕ черетлĕ ĕçсем пурнăçлаççĕ. Хăйсем хушшинче шăппăн та шăкăл-шăкăл калаçса пĕри вĕллен çивиттине усать, тепри тĕтĕмлет, виççĕмĕшĕ пыл рамисене тата вĕллери лару-тăрăва тĕрĕслет. Çаксем пулчĕç те ĕнтĕ Зинаидăпа Владимир Ивановсем тата вĕсен ывăлĕ Станислав **(сăн ӳкерчĕкре)**.

Утар çурчĕ патнелле тухсан эпĕ вĕсемпе пыл хурчĕпе ĕçлессине хăйсем епле алла илни пирки тĕплĕ калаçу иртттертĕм. Ăнлантăм, нихăшĕ те çак ĕçре ăнсăртран мар. Тĕрĕсрех каласан, вĕсем – утарçăсен пысăк династийĕн пĕр çирĕп сыпăкĕ. Зинаида качча килсен хурт-хăмăрпа туслашнă та 31 çул çак ĕçе юратса пурнăçлать пулсан, Владимир мĕн пĕчĕкренех утарта ӳснĕ. Унăн утарти ĕç стажĕ 40 çултан та иртет. Çакăнта пирĕн калаçу йăх-несĕл çине куçса кайрĕ.

– Пирĕн асатте-асаннесем хушшинче хурт-хăмăрпа ĕçлекен пулман. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин малтанхи çулĕсенчех аттен шăллĕ – Сергей Иванович – йывăр суранпа киле таврăнать. Пурнăç тути-масине самай активме тивнĕскер килте вĕлле хурчĕ тытма пуçлать. Вăрçăран Çĕнтерӳпе таврăннă атте те – Лука Иванович – çак ĕçе шăллĕнчен алла илет. Телее анне те – Анна Егоровна – мăшăрĕн пуçарăвне сивлемест. Хурт-хăмăра юратнипе хăй те утарçă пулса тăрать. Эпир – 5 ачи – вĕллесем патĕнчех ӳссе çын пултăмăр, – утар çинчен куçне илмесĕр каласать Владимир Лукич.

Ашшĕпе амăшĕ килте те, пĕрлешӳллĕ хуçалăхра та утар тытнине çулсем иртнĕ май Юля аппăшĕпе Владимир сӳнме паман, асăннă отрасльти çĕнĕлĕхсене алла илсе малалла тăснă, аталантарнă. Владимир Лукич чĕрĕк ĕмĕр ытла килти хушма хуçалăхрипе пĕрлех Ленин яч. хис. пĕрлешӳллĕ хуçалăх утарĕнче те вăй хунăскер, юлашки çулсенче «Путь Ильича» агрофирмăра хурт-хăмăр отраслне аталантарассипе тăрăшать. Хуçалăх ертӳçи А. Богданов та вĕсен ĕçĕпе кăмăллă.

Хуçалăхсен харпăрлăх тытăмĕ улшăнать пулсан та, хурт-хăмăрпа ĕçлес туртăм аталанса çеç пырать. Çакна утарçă паян тĕрлĕ тĕслĕхпе çирĕплетсе парайрать.

– Вĕлле хурчĕсемпе ачасемпе калаçнă пек хутшăнатăп. Хăйсемпе килĕшӳсĕр тытмасан, вĕсем те харсăр мар. Çапла вара пĕр-пĕрне ăнланса ĕçленипе хамăн ĕç ĕмĕрĕнче пыл хурчĕн пĕр çемйи пуçне 41 килограмм пыл илни те пулса, – кăмăллăн каласа парать утарçă.

– Ыранхи куна пăхса пурăнма утарта ĕçĕ çителĕклех. Эпир иртен пуçласа каçченех кунта тăрăшатпăр. Ĕçленĕ май хамăр ĕçе пурăна-киле ачасем тăсасса шанатпăр. Çавăнпа вĕсене паянах утарçă ĕçĕн вăрттăнлăхĕсемпе паллаштаратпăр, – терĕ пирĕн калаçăва хутшăнса Зинаида Геннадьевна. Çав вăхăтрах юнашар тăракан Стас ывăлне вăл пуçран лăпкаса илчĕ.

– Пыл хурчĕсемпе ĕçлеме хăрасси манăн иртсе кайнă ĕнтĕ. Утара эпĕ киле килнĕ пек килетĕп, – ашшĕпе амăшĕ çине йăл кулăпа пăхса каласрĕ Стас.

«Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр», – вĕрентнĕ ваттисем. Платкассинчи Ивановсем çакна ăша хывнă ĕнтĕ. Ваттисен çак сăмахне мала кăларса вĕсем таврара çук утар йĕркелесе янă. Ĕçлесен пурăнма пулать. Çакна утарçăсем çултан-çул хăйсен тĕслĕхĕпе çирĕплетеççĕ. Ĕçчен çынна кӳршĕсем çеç мар, çут çанталăкĕ те курать, хисеп тăвать, вĕлле хурчĕсем те вăй çитнĕ чухлĕ пулăшу параççĕ. Утарçăсемпе сăмахланă май вĕсем тăтăшах пĕр-пĕрне тав туса калаçнине асăрхарăм. Пĕрпĕрне ăнланни, май пур таран пулăшса пыни утар ĕçĕнче пысăк тĕкĕ. Паян вĕсем кашни пушă вăхăтрах утара васкаççĕ. «Кунта чун усăлать, сывлăх вăй илет, кану иртет, çемьери килĕшӳ аталанать. Çакна шута илсе вĕлле хуртне тав тăватпăр çеç. Вĕсемпе çывăх тăвансем пек ĕçлекен çынсене Пыл спасĕпе чунтан салам калатпăр, ӳсĕмсем сунатпăр», – терĕç Платкасси утарçисем пирĕнтен уйрăлнă май.

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Райадминистрацире

# Хисеп грамотипе наградăланă

Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн район администрацийĕн 2018 çулхи июлĕн 19-мĕшĕнчи 766-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

**– Лариса Анатольевна КАПИРОВĂНА,** «Путь Ильича» агрофирмăн тĕп зоотехникĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканне.

Асăрхаттару

# Вăрманта асăрхан

«Вăраран юлать те – пушартан юлмасть», – тет ваттисен сăмахĕ. Çакна кулленхи пурнăç та çирĕплетсх пырать. «Халăха çут çанталăкри чрезвычайлă лару-тăруран тата техногенлă характерлă инкексенчен сыхласси çинчен» федераци саккунне пурнăçласа вăрмансенче пушар хăрушлăхĕ ӳснĕрен вăрмансене транспорт хатĕрĕсем кĕртессипе тата унта çынсем пулассипе çивĕч асăрхаттару пур. Çавăнпа та паянхи шăрăх çанталăкра вăрмана канма кĕме «Сăнавлă вăрман хуçалăхĕ» учрежденин Ильинкăри участок лесничествинчен ирĕк илмелле. Çакă вăрманти пушар хăрушсăрлăхне ӳстерме пулăшасси пирки никамăн та иккĕленӳ çук.

Вăрмансене пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтересси нче вырăнти массăллă информаци хатĕрĕсем те пысăк пулăшу парассине шанатпăр. Иртнĕ çулсенче асăрхаттарусем пулнă пулин те, вăрмана канма тухакансен тимсĕрлĕхĕпе тата вĕсем канура пушар хăрушсăрлăх правилисене сĕмсĕррĕн пăсніпе, чĕртнĕ кăвайтпа асăрханмарн сăнавлă вăрман хуçалăхĕн территорийĕнчи вăрмансенче вут-кăвар алхасма пуçланă тĕслĕхсем пулнăччĕ.

Апла-и, капла-и, анчах асăрханулăх ытлашши пулмĕ. Çавăнпа та вăрманта вут чĕртекенĕн самантлăх асăрханусăрлăхĕ вăрман пуянлăхне сарассишĕн тăрăшнă вун-вун çын ĕçне кĕске вăхăтрах кĕллентерме пултарнине асра тытмалла. Вут-кăвар ан тухтăр тата саккун ыйтнине пăсас мар тесен вăрмана ĕçлеме е канма тухас шухăшлисен пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнассине тĕп вырăнта тытмалла.

**О. БАСКАКОВ,**
**патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн аслă инспекторĕ.**

Пулни-иртни

# Шăши

Çанталăкĕ халĕ шăрăх тăрать. Кăнтăрла хĕвел çинче писме питех те мар. Сулхăн вырăн шыраса верандăна кĕтĕм те сак çине канма выртрăм. Тĕлĕрсе те кайнă.

Вăранса кайрăм. Куçа усăтăп та мĕн куратăп-ха? Верандăн гипс картунĕ çапнă яка стени тăрăх çӳлтен шăши анма пикенет. Эпĕ сас парса шăшие хăратрăм. Шăши стена çумĕнчен вĕçерĕнсе кайса урайне çатлаттарчĕ. Пĕр ним хускалмасăр выртать. Чӳрече умĕнче выртакан хăйра татки алла лекрĕ. Пĕр шухăшласа тăмасăр ăна шăши çине вăрăнтартăм. Шăши вилнĕ пулас, пуçхĕрлĕ выртать, тапранмасть те.

Кăларса пăрахас пулать шăши виллине. Çавна валли хăма татки шырама кайрăм. Таврăнтăм та – шăшин шăрши те юлман. 2 метр çӳллĕшĕнчен урайне çатлаттарса ӳкни уншăн темех мар иккен. Тен вара вăл кирлĕ вăхăтра чееленме те ăс çитернĕ?

**В. МАСТЕРОВ,**
**ĕç ветеранĕ.**

Пирĕн календарь

# Суворов çарĕн çĕнтерĕвĕ

Августăн 15-мĕшĕ – Раççей çар историйĕн паллă кунĕ. Çак кун 1799 çулта Суворов çарĕ французсене Италири Нови ятлă хули патĕнчи çапăçура çапса аркатнă. Французсен 7 пин салтакĕ çапăçу хирĕнчех выртса юлнă, 3 пин салтак тыткăна лекнĕ. Çак çапăçу Итали похочĕ вăхăтĕнче Суворов тунă чаплă çĕнтерӳсенчен пĕри пулса тăрать.

Спорт

# Çĕнтерӳçĕ – шалти ĕçсен пайĕн команди



Физкультурник кунне халалласа çуллен ирттерекен ĕç çыннисен спартакиадине кăçал 12 команда хутшăнма кăмăл турĕ. Спартакиада августăн 10 – мĕшĕнче иртрĕ. Ăмăртусене хутшăнакансене район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Лилия Тарасова, район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Зоя Дипломатова, «Сывлăх» спорт шкулĕн директорĕ Александр Куликов саламларĕç.

Команда членĕсем çав кун 100 метра, 2 тата 3 километра чупассипе, турник çинче туртăнассипе, алă вăйĕпе урайĕнчен тĕртĕнессипе, тӳрĕ тăнă çĕртен малалла пĕкĕрĕлессипе, çурăм çинче выртнă çĕртен кĕлеткене çĕклессипе, пĕр вырăнта тăнă çĕртен икĕ урапа харăс сикессипе, 700 грамм таякан спорт снарядне ывăтассипе, 50 метра ишессипе, пневматика винтовкинчен тĕл пересссипе, канат туртассипе ăмăртрĕç.

Канат туртассипе район администрацийĕн команди мала тухрĕ. Хыççăнхи вырăнсене Оринин ял тăрăхĕн тата РФ Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн командисем йышăнчĕç.

Ăмăрту итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май спартакиада çĕнтерӳçин ятне вара РФ Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн команди тивĕçме пултарчĕ. Иккĕмĕшĕ – Оринин ял тăрăхĕн команди, виççĕмĕшĕ – район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕсен пайĕн команди.

**Сăн ӳкерчĕкре: çĕнтерӳçĕ-команда – РФ Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн команди.**

**К. ЗАЙЦЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

Полици хроникинчен

# Амăшне хĕненĕ

Тăван хĕрĕ амăшне хĕненине нимĕнле те ăнланма çук. Тĕнчери чи çывăх çын умĕнче пуç таймалла, ватлăх кунĕнче пулăшса пымалла.

Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи пĕр факт вара чун-чĕрене çӳçентерет. Çулĕпе çамрăк мар хĕрарăма маларах та тĕрлĕ статьяпа темиçе хутчен судпа айăпланă, çапах та пуçа ăс-тăн кĕменни курăнать. Амăшлăх туйăмĕ çукскер ватă çынна хĕненĕ. Амăшĕ çине алă çĕклекен хĕрарăмăн урам тăрăх утма та вăтанмалла пек туйăнать.

# Телефона «чун кĕнĕ»

Ют çын пурлăхне куç хывнă çын кашни утăмрах тейĕн, вăл е ку япалана пĕр самантлăх та тимлĕхсĕр хăварма юрамасть, унсăрăн нимсĕр тăрса юлма пулать.

Акă çак кунсенче Муркашри Хĕрлĕ тӳремре телефона «чун кĕнĕ». Ача хăйне меллĕ пултăр тесе велосипед çине пĕчĕк хутаçа телефон чиксе çакнă. Велосипеда пĕр вăхăтлăх урама хăварнă, тухнă та телефон йĕрĕ те çухалнă. Çавăнна та пĕр самантлăха та япалана тимлĕхсĕр хăварма юрамасть иккен.

**Пичете РФ шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**


Объявления / Пĕлтерӳсем

**Администрация Юнгинского сельского поселения информирует**

Администрация Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики доводит до сведения жителей информацию по вывозу ТБО и уборке территории сельского поселения от мусора. В бюджете Юнгинского сельского поселения на вывоз ТБО с населенных пунктов на 2018 год предусмотрено 202 тыс. руб. Договор на вывоз ТБО заключен с МУП ЖКХ «Моргаушское», график вывоза согласован: первый четверг каждого месяца. На 13.08.2018 г. с территории населенных пунктов Юнгинского сельского поселения вывезен 331 м³ твердых бытовых отходов.

Администрация Юнгинского сельского поселения напоминает: нельзя создавать несанкционированные свалки бытового мусора. Содержание в чистоте территории поселения – наша обязанность.

**КРОВЛЯ ЛЮБОЙ СЛОЖНОСТИ**
Работаем быстро: качественно, дешево. Поможем подобрать и доставить стройматериалы по низким ценам. Цены ниже, чем на рынке. КЛАДКА, ФУНДАМЕНТНЫЕ работы. Тел.: 8-905-342-00-70. 8-10.

**ПРОДАЮ: ПЕСОК, ОПГС (ГРАВМАССА), ПГС, ЩЕБЕНЬ, КЕРАМЗИТ и др.**
ДОСТАВКА из с. МОРГАУШИ. НЕДОРОГО. Тел. 8-927-862-42-44. 9-10.

**Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ. Доставка. Тел. 8-903-389-94-76.** 5-10.

**Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ. Доставка. Тел. 8-919-650-96-68.** 5-10.

**Продаю: Гравмассу. Бой кирпича. Песок. Щебень. Доставка. Тел. 8-905-028-22-25.** 1-10.

**Фундамент, кирпичная кладка, кровля любой сложности. Деревянные дома и бани, отделка домов сайдингом. Проект, смета бесплатно. Офис: с. Моргауши, Дом быта, каб. 4. Тел. 8-927-865-60-00, 8-937-940-80-55. 7-10.**

* * *

**Продаю ДЕШЕВО асфальтную крошку, щебень (ОПГС), гравмассу, песок, бой кирпича, чернозем, торф, навоз. Доставка. Тел. 8-961-347-25-47. 11-14.**

* * *

**ПЕСОК КАРЬЕРНЫЙ, РЕЧНОЙ, ГРАВМАССА, ЩЕБЕНЬ, БОЙ КИРПИЧА, ГРУНТ, НАВОЗ и.т.д. Доставка по Моргаушскому району от 1 до 20 тонн. НЕДОРОГО. Тел. 8-905-345-96-62. 4-10.**

* * *

**Хаклă хакпа ĕнесем, вăкăрсем, чирлĕ выльăхсем туянатпăр тата колхозсемпе те ĕçлетпĕр. Тел. 8-919-974-46-14. 8-10.**

* * *

**Услуги мини-экскаватора. Ширина ковша – 30, 40, 50 см., глубина – 2,7 м. Канализация, водопровод под ключ. Час работы – 1000 руб. + доставка. Работаем с организациями по безналичному расчету. Тел. 8-927-847-85-59, 8-962-599-04-70. 2-4.**

* * *

**Продаю: Гравмассу. Песок. Бой кирпича. Конский навоз. Доставка. Тел. 8-906-380-12-36. 3-11.**

* * *

**Продаю солому, сено 1, 2 укоса в тюках. Есть доставка. Тел. 8-927-858-62-86. 3-5.**

* * *

**Требуются свиноводы в ООО «Бездна» в дер. Рыкакасы. З/п своевременная со всеми соц. пакетами. Тел. 8-906-388-66-04. 3-5.**

Продаем пиломатериалы обрезные, кровельные 25 мм, половые 50 мм, брус любого размера; цемент. Доставка бесплатно. Цена договорная. Тел. 8-903-346-40-58, 8-927-996-16-52. 10-10.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ Тел. 8-927-667-40-92.** 8-43.

**Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ. Доставка. Тел. 8-903-065-60-58.** 21-44.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел. 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 1-20.

В магазине «Василек» на территории Моргаушского рынка – **НОУТБУКИ, КОМПЬЮТЕРЫ, СОТОВЫЕ ТЕЛЕФОНЫ!!! Большой выбор! АКЦИЯ ДЛЯ ШКОЛЬНИКОВ И СТУДЕНТОВ! Огромные скидки и приятные подарки! холодильники, морозильники**
Велосипеды
Стиральные машины
Газовые, электрические плиты
ЖК телевизоры
Микроволновки
Пылесосы, сотовые телефоны, а также мелкая бытовая техника (блендеры, чайники и др.)
Кредит. Рассрочка.
Доставка бесплатная. Тел.: 8-906-135-98-89. 4-5

**ООО «Торговый центр» Моргаушского райпо приглашает на ШКОЛЬНУЮ ЯРМАРКУ 17 и 24 августа 2018 года по адресу: с. Моргауши, ул. Мира (перед магазином «Гастроном»). В рамках школьной ярмарки будет реализовываться школьная и спортивная форма, обувь, канцелярская принадлежность в ассортименте и по низким ценам.**
**ООО «Торговый центр» работает ежедневно с 08 до 19 ч. по адресам:**
**- с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 6, «Торговый центр»**
**- с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4, «Детский магазин» (2 этаж).**
**Администрация. 2-2.**

**Куплю скотину дорого: КОРОВ, БЫЧКОВ, ТЕЛОК, ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Тел. 8-961-345-77-89. 3-25.**

* * *

**Куплю коров, бычков, телок, молочных телят, баранов, овец. Тел. 8-905-341-69-25. 3-6.**

* * *

**Администрация МБОУ «Тораевская СОШ» принимает на работу водителя школьного автобуса. Тел. 8-835-41-64-2-47. 2-2.**

* * *

**7 тата 8 уйăхри тынашкисене малалла усрама сутатпăр. Тел. 8-967-790-90-66.**

* * *

**Продается бревенчатый пятистенный дом 6х10 м. Есть газ, свет, вода, придворные постройки, погреб. Земля 42 сот., яблони, вишня, слива и прочие плод. деревья. Земля ухоженная. Тел. 8-905-376-95-99.**

* * *

**Продается черная, белоголовая телка, отел в начале марта. Тел. 8-919-664-80-35.**

* * *

**Пĕрре пăрулана хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел. 8-927-669-36-02.**

* * *

**Требуются рабочие (грузчики, сборщики) на сбор картофеля в Спасском районе Нижегородской области. Тел. 8-903-042-22-23, 8-960-182-13-55.**

**Продается кирпичный дом пл. 150 кв. м с отделкой в с. Александровское. Есть гараж, произв. пом. и баня. Территория огорожена профнастилом. Вокруг дома 20 сот. зем. участка, фруктовый сад. Имеется электричество и вода. Рядом с домом магазин, церковь, фельд. пункт и 2 пруда. Цена договорная. Тел. 8-917-674-46-24.**

* * *

**Куплю участок с домом за 100–150 тыс. руб. или меняю 2-хкомн. квартиру в г. Козловка на дом, равноценной стоимости. Тел. 8-987-124-13-35. 1-2.**

* * *

**Продаются: 2 дойные козы, 2 козла, 2 козленка (все безрогие). Тел. 8-987-122-81-31. 1-2.**

* * *

**Продается земельный участок пл. 28 соток под строительство жилого дома в с. Б. Сундырь. Имеются газификация, электрофикация, водоснабжение. Тел. 8-906-387-66-97. 1-5.**

* * *

**ОАО «Ядринмолоко» приглашает на работу микробиолога, лаборанта, укладчика-упаковщика, грузчика. Трудоустройство по ТК, полный соц. пакет. Тел. 8-965-688-97-40, 8-962-321-23-40. 1-5.**


Прогноз погоды — По данным сайта rp5.ru

| | Среда | | | | Четверг | | | | Пятница | | | | Суббота | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Явления погоды | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура | +13 | +22 | +25 | +19 | +21 | +23 | +25 | +18 | +16 | +19 | +22 | +15 | +14 | +18 | +21 | +12 |
| | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Давление | 748 | 749 | 748 | 747 | 744 | 744 | 745 | 745 | 747 | 750 | 750 | 751 | 751 | 752 | 752 | 752 |
| Ветер | 3 | 3 | 4 | 4 | 7 | 7 | 6 | 3 | 4 | 4 | 5 | 3 | 3 | 5 | 5 | 2 |
| Порывы | | 7 | 11 | 7 | 13 | 13 | 13 | 7 | | 9 | 11 | 8 | | 10 | 11 | 7 |
| Направление | З | З | Ю-З | Ю | Ю-З | Ю-З | З | С-З | С | С | С | С | С | С | С | С-В |

Note: the printed table has 20 time columns; the Суббота block continues:

| | Суббота (продолжение) | | | |
|---|---|---|---|---|
| Местное время | 03 | 09 | 15 | 21 |
| Температура | +9 | +19 | +21 | +13 |
| | +8 | | | |
| Давление | 752 | 752 | 750 | 750 |
| Ветер | 2 | 2 | 2 | 3 |
| Порывы | | 6 | 7 | 6 |
| Направление | С | В | С-В | Ю-В |


Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви.
ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин "Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
Телефонсем: тĕп редактор - 62-1-36, бухгалтери - 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: smi24@cap.ru, smi24-1@cap.ru, redaction_morgau@mail.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла таврăса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Р– реклама материалĕ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юнкунсерен тата шăматкунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ В.Л. Шапошников.
Пичете панă 14.08.2018 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4390

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии АО «ИПК «Чувашия»: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.